Çулсем тата çынсем

«12 çултаччĕ эпир ун чухне», –

пуçларĕç калаçава хура-шурне сахал мар курнă ĕç ветеранĕсем

Çын ĕçпе илемлĕ. Çак илеме шута хурсан унăн вĕçсĕрхĕрсĕр виçи ĕçпе ырă ята тивĕçнисен пурнăçне анлăлатать те анлăлатать, вĕсен пирĕн общество умĕнчи пĕлтерĕшне çуллĕ тусенчен те ытларах çĕклет. Хамăр вĕсем умĕнче яланах парăмрине шута хурса, вĕсен ĕçченлĕхĕпе çамрăк ăрава паллаштарас тесе тĕл пулăва васкарăм ку хутĕнче.

Пулăç пулăça инçетренех курать теççĕ те, ĕçре пиçĕхсе ўснĕ тата пурнăçра тарăн йĕр хăварнă Ольга Федоровна Федоровапа Кира Петровна Атамова мана калаçса татăлнă пекех пĕрле кĕтсе илчĕç.

ЫВĂНСА ТЕСЕ ЛАРМАН

Пурнăç тути-масине çителĕклех активсе курнă аслă пĕлĕшĕм тата çывăх çыннăм Ольга Федоровна Федорова кашни сăмаха шутласа калаçать. «Çиччĕ виçсе пĕрре касать», – теççĕ кун пирки чăваш халăх сăмахлăхĕнче. Ку вăл ман умра ларакан Социалилизмла Ĕç Геройĕн уйăлми енĕ.

– Паян ырă ятлă пулас тесе пуш параппан çапакансем чылайланчĕç. Вĕсен сăмахĕсемпе ĕçĕсем пĕр килменни кашни утăмрах курăнать. Çапах та чылай чух çавсемех предприяти-организацисене ертсе пыраççĕ, пĕрлешўллĕ хуçалăхсене банкрот çулĕ çине илсе тухаççĕ, ăнăçлă аталанмалли предприятисенех çĕнĕлĕхсем кĕртмесĕр «хўрере» илсе пыраççĕ. Çакнашкал киревсĕрлĕхе эпĕ чăтма пултараймастăп, – терĕ хăйне çиччĕ виçсе калаçни пирки каласан О. Федорова.

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Çатракасси ялĕнче хресчен çемйинче 1929 çулта сентябрĕн 7-мĕшĕнче çуралнă тата кунтах пурнăçăн тĕп пайне ирттернĕ Ольга Федоровна ачаранах ĕçе юратса çитĕннĕ. Урăхла епле-ха, кашкăра ури тăрантарать тенĕ пек, ял çынни те çĕр ĕçĕпе туслă пулаймасăр пурăнаймасть. Çĕр ĕçĕпе пĕрре туслашсан вара – вăл ĕмĕрлĕхе! Çĕр ĕçĕнчи тирпейлĕх вара хĕр пĕрчине амăшĕнчен куçса пынă. Паян тумалли ĕçе ыран хăвармалла мар – çак тĕллев никĕсленнĕ Ольгăра. Виçĕ пиччĕшĕ те – Сильвестр, Санькка, Якку – ĕçрен аякра тăман. Туслă та ĕçчен çемьене ялта ăмсанса пăхман çын пулнă-ши вăл вăхăтра? Йăлтах йĕркеллĕччĕ темелле, анчах...

1941 çулхи ытти çу кунĕсенчен нимĕнпе те уйăлса тăман июнĕн 22-мĕшĕ. Кăнтăр вăхăчĕ çывхарса пырать. Федоровсен туслă çемйи уяр та типĕ çанталăкра пахчари метр çуллĕш кантăр патĕнче. Сипсимĕс кантăр тухăç пысăк пуласса шантарать. Ёмĕтсем пысăк. Çав вăхăтра пахчана кўршĕре пурăнакан Арсентий Захаров пырса кĕрет те (Ольга Федоровна ăна паянхи пекех астăвать): «Çак кантăр мĕн тума кирлĕ ĕнтĕ! Вăрçă пуçланнă! Часах фронта каятăп!» – тесе хурать. Мĕн вăл вăрçă? Ялти икĕ çын çапăçнă пеккии? Вăрçă пĕлтерĕшне чуна илеймен-ха вăл вăхăтра 12 çулхи Оля. Анчах кунсем иртнĕ май унăн йывăрлăхĕ аслисемпе пĕрлех ачасен хул пуççийĕ çине те тиеннĕ.

– Ывăнса тесе ларма вăхăт пулманах çав. Хирте аслисене пулăшнипе пĕрлех кĕркунне çитсен хĕле хатĕрленсе шкултан тавраçнăн вăрмантан çĕклемпе вутă йăтаттăмăр. Сивĕсем пуçлансан ыраш кĕлтипе кăмака хутаттăмăр. Аннесем вара фронт валли ĕçлетчĕç, – йывăррăн аса илет О. Федорова. Вĕреннĕ те ĕçленĕ, ĕçленĕ те вĕреннĕ вăрçă ачисем. Ывăнса тесе ларма вăхăт пулман. Амăшĕсем ăшă ыйхăра çывăраканскерсене вăратса аван çапма илсе кайни пĕрре кăна пулнăи вăл çулсенче? Хăйсем çўллĕш кĕлтесене траппа молотилка патне йăтса хăпартни, ывăннипе ураран кайса ўкни, тăрсан каллех кĕлте патне утни асран тухĕ-и хăçан? Çук. Çаксем йăлтах паян кун та Ольга Федоровна асĕнче.

Вăрçă хыççăнхи çулсем те çăмăл пулман ачасемшĕн. Ёçлемесĕр çăкăр пулмасть. Çак чăнлăха вăрçă ачисем хăйсен ĕнси çинче чăтса ирттернĕ. Килтех амăшне пулăшмалла ĕне сунă Оля 7 класс пĕтерсенех 1945 çулхине хуçалăх фермине дояркăна ĕçлеме каять. Фермăра ĕçлекенсене темиçе грамм ытларах çăнăх пани те вăл вăхăтшăн пысăк ĕç укçи пулнă. Çакăнтан пуçланать те вăл обществăлла выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлесси.

– Таçта çапкаланса çўремен. Вĕренмелле, вĕренмелле тата вĕренмелле, тенĕ пек, манăн ĕçлемелле те ĕçлемелле, татах ĕçлемелле девиз пулса. Çак тĕллеве пурнăçа кĕртрĕм. Уншăнах 30 çул йĕркеллĕ çывăрса курман. Вăл шутран 25 çулне дояркăра ирттертĕм, – терĕ шăпах ĕне сăвассипе палăрнăшăн Социализмла Ёç Геройĕ ятне тивĕçнĕ Ольга Федоровна Федорова.

ИКĔ ПЎРНЕ САРЛАКĂШ ÇĂКĂР...

– Эпĕ Ольга Федоровнаран 6 уйăх çеç кĕçĕнрех пулнăран вăл вăхăтри йывăрлăхсене вăл каласа панă пекех чăтса ирттернĕ, – калаçава хутшăнчĕ Кира Петровна Атамова ĕç ветеранĕ. – Вăрçă терчĕнуши, фронта пулăшма тăрăшса халăх выçă ларни, йывăрлăхсене пăхмасăрах вĕренме тăрăшни халĕ те куç умĕнче. Çапла каласа Кира Петровна тутăр кĕтессипе куçсульне шăлса илчĕ... Самантлăха шăпланчĕ. Аса илў алăкĕ çăмăллăн уçăлмасть пулас çав. Кăшт вăхăт иртсен пирĕн калаçу та йĕркеленсе кайрĕ.

... Нимĕçсем Мускав патне çитнĕ текен хыпар ялта хăвăрт саралчĕ. Мускав вăл çĕр-шыв чĕри-çке. Унта тăшман кĕрсен ыррине кĕтме çук. Çакна ял çынни кашниех аван ăнланчĕ. Кирăн амăшĕ те çак хыпарпа урамран кĕрсен сухарисем типĕтме пуçларĕ. Сахалпа инçе каяймăн. Нимĕçĕсене пирĕннисем тахçанрах хăваласа ярĕç-ха. Çапла шутласа фронтран инçетри чăваш хĕрарăмĕ пĕр пысăк михĕ сухари хатĕрлерĕ. Малалла мĕн тумалла, ăçта каймалла – ял çынни пĕлмест-ха. Фашистсем Мускавран Шупашкара çитсен пĕтрĕмĕр-иç! Шелсĕр вĕлерме пуçлĕç! Çĕпĕрелле каймалла пулать-тăр. Вăрçă сас-хурин хăрушлăхĕпе тулнă ялсенче каçсерен урама çутă ан тухтăр тесе чўречесене хура утиалсемпе картлама пуçларĕç. Пўртсенчи пĕчĕк лампăсем çурта пек çунатчĕç: пўртре çухалса каяс мар та такăнса ўкес мар.

Кашни утăмра йывăрлăх, кашни утăмра хуйхă. Совет халăхĕ вара малаллах пăхнă, ачисене те хутла вĕрентес ĕçрен сирмен. Выçăллă-тутăллă ачасем кунсеренех шкула çўренĕ, кĕнеке хĕррисене, хут листисене алă тупанĕ çине хурса çырнă, анчах вĕреннĕ.

Мĕн вăл укçа? Ана пĕлекен пулман. Колхозра ĕçлекенсене кăнтăрла пăрça яшки çитернĕ пулсан, килте – вĕлтĕрен е мăян шўрпи тата çĕр улми çеçкинчен пĕçернĕ апат. Çак апатпа шыçăнса кайса чирлесе вилекенсем сахал пулнă-и тата.

– Хăçан тырă вырма тухаççĕ-ши тесе кĕтеттĕмĕр. Ун чухне тин йĕркеллĕрех яшка çиме пулатчĕ. Апатпа пĕрле икĕ пўрне хулăнăш çăкăр пани пирĕншĕн пысăк уявччĕ, – аса илчĕ пыйтăпа шăркаран иртĕнсе пĕтессе шутламанни пирки каласа Кира Петровна.

Анчах хаяр вăрçă çулĕсем те мал туртăмлă çамрăксен вĕренес ĕмĕтне хуплайман. Вăрçă чарăннă çул Кира Çĕрпўри ял хуçалăх техникумне агронома вĕренме каять. Çакăр пулсан – пурнăç пулать. 1948 çулта училищĕне ăнăçлă вĕренсе пĕтерсе агроном яла таврăнать. Мал ĕмĕтлĕ çамрăкăн татах вĕренес тĕллев пур. Çапла вара Кира 1953 çулхине (Сталин вилнĕ çул, тет ăна ĕç ветеранĕ) Канашри медицина училищине вĕренме кĕрет. Ун хыççăнхи ĕç утăмĕсем: Мăн Хураçкари фельдшерпа акушер пункчĕ, Муркашри тĕп больница. Йывăр вăхăтсене парăнмасăр илнĕ пĕлў нихăçан та ытлашши пулман.

– Эпир хамăршăн мар, çĕршыв тĕреклĕхĕшĕн ĕçлесе. Паян та çав çулсене аса илсен хамăр тăрăшулăхшăн кăмăл çĕкленет, – терĕ калаçăвăмăра вĕçлесе алла чей чашăкĕ тытса Кира Петровна Атамова ĕç ветеранĕ.

Анатолий БЕЛОВ.

Çĕнĕ рубрика – «Милици кунне халалласа»

Мал туртăмлă çамрăксем

Манпа калаçса ларакан Ирина Николаевна Самойлова **(сăн ўкерчĕкре)** 22 çула пуснă çеç-ха, анчах обществăри йĕркелĕх туйăмне малти вырăна тăратнă.

– Мĕншĕн милицире ĕçлес çула суйласа илтĕн-ха? – ыйтатăп хĕртен.

– Пурнăçĕ хăй çак çул çине илсе тухрĕ тесен тĕрĕсрех пулать-тăр. Москакассинчи вăтам шкулта 9 класс пĕтернĕ хыççăн хам ачаран юратнă ĕçĕме суйласа Шупашкара кондитера вĕренме кайрăм. Пĕлў çулĕ вара шалтан шала туртса кĕрсе кайрĕ: кондитера 3 çул вĕренсе диплом илнĕ хыççăн хамăн аттепе унăн йĕкĕрешĕн пурнăç çулне пăхса, вĕсем Афганистан вут-çулăмĕнче çĕр-шыв интересĕсене хўтĕлесе пуç усманнине шута хурса, вĕсен ĕçне малалла тăсас ĕмĕтпе, аттен йăмăкĕпе йысна иккĕшĕ те милицире ĕçленине курса тăрса тата вĕсемпе калаçса РФ ШЕМĕн Чул хулари академийĕн Шупашкарти филиалне куçăмсăр майпа вĕренме кĕтĕм. Вĕреннине кура пĕлтĕр районти шалти ĕçсен пайне ĕçе вырнаçрăм. Йывăрлăхсене пăхмасăрах ĕç килĕшет. Ку вара малалла туртăнма, аслисем пуçланă ĕçе вĕçне çитерме ыйтать. Эпир ăна тума хатĕр, – терĕ ман ыйту çине тулли хурав парса юлашки çулсенче шалти ĕçсен пайне ĕçе вырнаçнă çамрăксен ячĕпе Ира Самойлова.

Çамрăксем тенĕрен. Вĕсем шалти ĕçсен пайĕнче сахал мар. Акă юлашки пĕр-икĕ çулта кунта ĕçе вырнаçнисем: Света Москалева, Люба Павлова, Сергей Аксендаров, Михаил Мерлов, Сергей Николаев, Сергей Смирнов, Оксана Воробьева, Александр Прокопьев, Денис Семенов, Нелли Бочкина, Инга Игнатьева. Çамрăк пулнине пăхмасăрах вĕсем кашниех мал туртăмлă.

А. БЕЛОВ сăн ўкерчĕкĕ.

01 пĕлтерет, асăрхаттарать

Кăмака ăшă парать те…

Хĕл сиввисем çитсех кĕрейменнине шута илсе ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсен, пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхра ĕçлекенсен ял çыннисемпе пушар хăрушсăрлăхĕпе ăнлантару ĕçĕсем ирттермелле, пурăнмалли çуртсемпе çынсем нумай пухăнакан вырăнсенче хăй тĕллĕн тунă электрокăмакасемпе усă курма чармалла, тăнăç мар çемьесемпе эрех нумай ĕçекен çемьесене, пĕччен пурăнакан ватăсемпе инвалидсене уйăм шута илмелле, ведомствăлла пушар хуралĕ тытаканскер техника юсавли çине тимлĕх уйăрмалла. Ку – пĕрремĕшĕ.

Район территорийĕнче вырнаçнă коллективлă сад участокĕсенчи дача лаптăкĕсем паян ытларах чух «манăça тухнă» вырăнсене аса илтереççĕ. Анчах унта та пурнăç пыни пирки вĕсенче тухакан пушарсем аса илтерсех тăраççĕ. Акă паянхи куна кăçалхи 18 пушартан (пĕлтĕр 38 пушар пулнăччĕ) 3-шĕ коллективлă сад участокĕсенче тухрĕ. Кашниччех инкек сăлтавĕ – кăмака. Республика шайĕпе пăхсан та кашни 10-мĕш пушар сад участокĕсенче тухать. Çакă пушарпа кĕрешекенсем умне пысăк ыйту кăларса тăратать: сад участокĕсене кĕмелли çулсем уçă марри, йĕри-таврал-ла типĕ курăк пухăнса кайни, «вăхăтлăх» электрохуçалăх, çаксене курах уçă çулăмпа хăрамасăр усă курни, дача участокне пыракансем эрех ĕçнине кăвайт чĕртессипе пĕрлештерни, дача участокĕсенчи кăмакасем çине тимлĕх уйăрманни, мăрьесене тасатса тăманни, кăмакасемпе мăрьесем тунă чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни т. ыт. те.

Çаксене курса тăнă çĕртех хĕл кунĕсем пуçланиччен дача участокĕсене çитсе килекенсен пушар хăрушсăрлăх правилисем çине тимлĕх уйăрасчĕ. Çак тĕллевпе:

– пушар хăрушсăрлăхне пăхăнман тимĕр кăмакасене вырнаçтарасран асăрханмалла;

– кăмакасем çинче хăвăрт хыпса илекен хатĕрсене упрамалла мар;

– кăмака хутнă чух хăвăрт хыпса илекен материалсемпе (бензин, краççын) усă курма юрамасть;

– сўнмен кĕле çуртсем çывăхне тухса тăкма юрамасть;

– çунакан кăмакана никам пăхмасăр пăрахса хăвармалла мар;

– вентиляци каналĕсене мăрье вырăнне усă курма юрамасть;

– кăмакана ытлашши хутса вĕрилентересрен асăрханмалла.

Ана е кăна пула дача участокĕсенче е килти хушма хуçалăхсенче ирĕке кайма пуçланă инкеке курсан пĕр тăхтаса тăмасăр çăлакансен службине 01 номерпе (мобиллĕ телефонран 112 номерпе) пĕлтермелле, кўршĕсене чĕнмелле, пушар хуралĕ килсе çитиччен «хĕрлĕ автанпа» алă айĕнчи хатĕрсемпе кĕрешмелле.

Пушара сўнтериччен асăрхаттарма çăмăлрах. Çавăнпа та пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине ялан çўллĕ шайра тытмалла.

А. ЕФИМОВ,
районти патшалăх пушар надзорĕн уйăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракане.

РЕДАКЦИРЕН. Сентябрĕн 21-мĕшĕнче Катькас ял тăрăхĕнчи «Дружба» коллективлă садра çўлерех кăтартнă асăрхаттарусене пурнăçламанран пĕр дача участокĕнче дача çуртĕпе мунча кĕл пулчĕç.

Спортри ўсĕмсем

«Сывлăх» боксерĕсем палăрчĕç

Район центрĕнче савăнăçлă лару-тăрура «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне уçнăранпа виçĕ уйăх хыçа юлчĕ темелле. Çак тапхăрта районта пурăнакансенчен чылайăшĕ спорт комплексĕ районти çамрăксемшĕн спортпа сывлăх çулне уçакан тĕп çăл куç пуласса кĕтрĕ. Кĕтекенсем телейлĕ теççĕ. Иртнĕ кунсенче ўсĕмĕн пĕрремĕш хыпарĕ «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексне çитрĕ. Тунти кун унăн директорĕ А. Куликов иртнĕ канмалли кунсенче (сентябрĕн 27 – 28-мĕшĕсем) кунти бокс секцине çўрекенсем Çĕмĕрлере ирттернĕ боксерсен республикăри уçă турнирĕнче ырăпа палăрнăшăн ФСК боксерĕсене Николай Скворцовпа Стас Кожевникова ятранах саламларĕ **(сăн ўкерчĕкре)**, вĕсем çине пысăк шанчăк хунине пĕлтерчĕ: Николай 48 кг виçе категорийĕнче 1-мĕш вырăн, Стас вара 38 кг виçе категорийĕнче 3-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Асăннă ăмăртăва район администрацийĕн вĕрентў тата çамрăксен политикин пайĕн ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсем те хутшăннă. Вĕсенчен Алексей Илларионов çамрăк 44 кг виçе категорийĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă.

Боксерсен пĕрремĕш ўсĕмĕсем «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн ĕçне ырă витĕм кўрессе шанса тăратпăр.

– Урăхла пулаймĕ те. Пире кунта ўсĕм çулĕпе утма-аталанма пур условисем те çителĕклĕ. Çакна ытти секцисене çўрекенсем те çирĕплетессе шанатăп, – терĕ «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнчи бокс тренерĕ М. Николаев.

А. ПЕТРОВ сăн ўкерчĕкĕ.